Рег. ном. 99
41-260
3095

Ухсай Яккӑвӗ



# Лирика

2
O.T.K.

41-260

УХСАЙ ЯККĂВĔ

1 июля 41 г.
№ 99

# ЛИРИКА

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

# ХИСЕП ТЕ ТАВТАПУÇ

* * *

Хуп-хура тĕксĕм кĕрхи çĕр
Асăмран тухмасть, анне!
Манас çук татти-сыпписĕр
Хăйчикки çуннисене.

Еррипен юрлана майăн
Хултăрчу çавăрăнсан,
Умăнта нумай-нумайăн
Шӳррӳсем тулатчĕç сан.

Пир тĕртме ларсан, çӳхе хĕç
Вылянатчĕ вăркăнса,
Ташласа кăна, сиксе çеç
Ярăнатчĕ-çке ăса.

Юмахри хĕр кăвакарчăн
Пулса вĕçнисем çинчен,
Кĕмĕл çӳçлĕ ватă карчăк
Ăмăрткайăкĕ çинчен

Юрласа параттăн. Эпĕ
Тĕлĕреттĕмччĕ ялан.
Хĕн-хурсем тăрна карти пек
Кĕввӳнте йĕретчĕç сан.

Йӳҫӗ ҫӑкӑр, тутлӑ турӑх
Ҫирӗплетрӗҫ ӳт-тире,
Сан сӗтӳ те, сан юрру та
Тулчӗҫ манӑн чӗрере.

Ӳсрӗм, пултӑм ӑмӑрткайӑк,
Икӗ аллӑм—ик ҫунат.
Инҫене, аннемҫӗм, кайӑп,
Эсӗ панӑ юн ҫунать.

Йӗлмерен пӗкӗ авмалӑх
Вӑйлӑ ҫамрӑк пӗвӗм пур.
Маншӑн хӗсӗк ҫакӑ алӑк,
Ывӑҫра шӑранчӗ пӑр.

Виҫӗ ҫухрӑмри чӗкеҫӗн
Ҫунатне курать ман куҫ.
Ҫавӑн пек мана, аннеҫӗм,
Ӳстернишӗн тавтапуҫ!

Ӑмӑрткайӑк хӑйӗн амӗш
Мамӑк хывнӑ йӑвинчен
Кайӗ те, ниҫта хӑрамӗ,
Ларӗ ҫӳлӗ ту ҫинче.

Ирхине тек вӑратаймӑн
Эс мана—тӗпренчӗкне.
Йӗс тура ан тыт—тураймӑн
Хуп-хура ҫӳҫӗмсене.

1935.

## ĂМĂРТКАЙĂК

Кăвак пĕлĕт хушшинче
Ăмăрткайăк ярăнать,
Сывлăш çинче, ту çинче
Хуçа тесе мухтанать.

Вăл курманччĕ хăйĕнчен
Вирлĕ вĕçнĕ кайăка,
Тĕл пулманччĕ халиччен
Хăй пек çӳлĕ каякан.

Ăна хирĕç курăнать
Кĕрлекен аэроплан.
Ăмăрткайăк шухăшлать:
Çĕнтерейменĕн, ан хăтлан!

Сарлака çуначĕпе
Тăшманне пĕр перĕнсен,
Чăлпар ӳкрĕç тĕксемпе
Юнлă татăк-кĕсĕксем.

1940.

## ХИРТЕ

Шăнкăрав пек саслă тăрисен
Пĕлĕтре янтраççĕ юррисем.

Сĕт пек шурă та çăра тĕтре
Вăрмана кĕрет те тĕтĕрет.

Эп тухатăпаслă уй-хире.
Ерripен çеç сирĕлет тĕтре.

Çил вĕрет те—уçă манăн ум.
Хум иртет те килет тепĕр хум.

Пĕкĕ çўллĕш ўснĕ тырăсем
Силленеççĕ, вăштăр çил вĕрсен.

Эп шыратăп хамăн тусăнне
Тăлăх тăрса юлнă тăприне.

Куçĕсем йĕпхĕн хураччĕ ун.
Асăмра паян та иртнĕ кун.

Вилнĕ çакăнта вăл, çак сăртра
Тăшманпа кĕрешнĕ вăхăтра.

Чӗрӳнтен шӑтса ӳсет тырпул.
Лӑпкӑ ҫывӑр, тусӑм, канлӗ пул!

Куҫ шӑрҫийӗ витӗр хуратул
Чечекленнӗ. Тусӑм, канлӗ пул!

Тыррине ҫисен, юну кӗрет,
Сан сассу ман юрӑра кӗрлет.

1933—40.

## ПОЭТ

Çулсем иртсен, пуçа шур çӳç витсен,
Асат хуçнă пек кукăр пулĕ çурăм,
Хирти пĕччен. шап-шурă хурăн
Шавланă пек хумханĕç юрăсем.

Вăрман пекех хăлхаллă, уй пек куçлă
Хăватлă пулăп, ватăлмăп нихçан;
Алран перо ӳкмешкĕн пуçласан,
Каллех те çĕнĕрен çĕн юрă пуçлăп.

Ман чĕрере вĕрет хĕвеллĕ вĕри юн:
Унта ӳсет хĕрӳ поэзи сачĕ;
Унта саркайăксен юрри хăвачĕ;
Унта хĕлле пулаймĕ, — çумĕ юр.

Çӳçсем çĕмĕрт çеçки пек пулĕç шурă,
Анчах та кăмăл çамрăк юлĕ ман,
Кĕр умĕн туратти те йăтайман
Çырла пекех çуралĕ манăн юрă.

Вилес сехетĕм шăппăн çывхарсан:
„Каятăп эп. Туссем, эсир сыв юлăр!"—
Тесе хăварнă чух, лăпланĕ юнăм,
Хупланĕ куçăм, пĕрĕнĕ тутам.

1939

* * *

Хумма Çеменĕ сатĕнче эпир
Пĕрре лараттăмăр. Çилсем вĕретчĕç.
Уç сывлăм шăрçисем çинче çиçетчĕ
Анис пекех хĕрлĕ хĕвеллĕ ир.

Чие хĕрелнĕччĕ, анчах поэзи
Пиçсе çитменччĕ манăн ун чухне,
Çунат сарман имшер йĕркемсене
Вулаттăн та кăштах мухтаттăн эсĕ.

Кăлканла пушкăрт аслă хирĕнчен
Хăват илсе, чăваш поэзинче
Алла сулса ишесшĕн çунтăм эпĕ.

Патваррăн сиртĕр çӳллĕ хумсене,
Илемлĕн тухтăр халăхăм умне
Чĕре çуратнă сăввăмсен карапĕ!

1940.

* * *

Юратрӑм эп, хирсем, сире,
Сана та, сӗм хура вӑрман.
Нихҫан та шухӑ чӗрере
Ку юрату ҫухалмӗ ман.

Ача чухне эп ҫаруран
Чупаттӑм аркӑр ҫийӗнче,
Курка ҫӗлеттӗм хупахран,
Ӗҫеттӗм шыв ҫӑлкуҫӗнчен.

Вӑрманӑм пачӗ хӑй хупне
Сӑпка ҫинче мана сикме,
Уйхир ырашӑн сӗткенне
Тултарчӗ манӑн пӗвӗме.

Нихҫан сирти хӑватӑра
Манмастӑп; хамӑн юрӑра
Ура тапса, пуҫа ухса
Сире мухтатӑп эп, Ухсай.

1929.

# ИВАНОВ ВӐРМАНӖ

Пирӗн атте—ват юман.
*Халӑх юрринчен.*

Поэт юман пулса шавланӑ
Асаплӑ чуллӑ ҫӗр ҫинче,—
Кашни ҫулҫи пӗр юрӑ панӑ,
Юман юрланӑ пӗр пӗччен.

Ӑна усал тӗнче тӗп тунӑ.
Юман кунҫулӗ вӑрӑм мар...
Йӗкелӗсем нумай-ха унӑн,—
Ҫӗкленӗ, ашкӑрӗ вӑрман.

Мухтавлӑ йывӑҫа кам манӗ?
Пуҫ тайрӗ халӑх кӑмӑлтан.
Йӗкелсенчен юман вӑрманӗ
Хӑпарчӗ пӗлӗтсем таран.

Ӗрчевлӗ вӑрлӑх акаканӗ
Кайсан та, ӗмӗчӗ кайман.
Кашларӗ Иванов вӑрманӗ,
Хитре вӑрман, сӗм-сӗм вӑрман,
Чӑваш поэзийӗн вӑрманӗ.

1940

## ПУППА КАЛАҪНИ

П у п

Сыв юл! Тур пиллĕхĕ манран.

И в а н о в

Парсан та, кирлĕ мар тархасшăн.

П у п

Ҫыртасчĕ чĕлхӳне, ҫукран
Хăвна ху ҫылăхсем пухасшăн.
Асту, ачам! Ҫӳлти аттемĕр
Хăрушă суд сехетĕнче
Мĕн калĕ-ши?

И в а н о в

Ҫӳлте ҫӳремĕп.

П у п

Вилсен, ăҫта?

И в а н о в

Ҫĕр айĕнче
Выртсан, ҫухалĕ ҫут тĕнче,
Ӳстерĕ тырă ман чĕре,
Анчах тырри сана ан лектĕр,
Лексен те, хăлчăкĕ пĕрех
Пырна ларса сана вĕлертĕр!

1940.

## ЙĔТЕС

Астăватăн ĕнтĕ эсĕ,
Чип-чипер Настаç инкем:
Санăнччĕ тĕпел кĕтесĕ,
Санăнччĕ ухват-инкек.

Çураçмашкăн килес умĕн
Хăпрĕ—теттĕнччĕ—сехре,
Хирĕç пултăм теттĕн имĕш
Пуш витреллĕ пĕр хĕре.

Çĕнĕ кин пулса кĕресшĕн
Хапхана уçсассăнах—
Чупрĕ каçрĕ, теттĕн, темшĕн
Çул çинчен хура кушак.

Ну, инкемçĕм, ĕнтĕ юрĕ,
Ĕлĕкхи килет аса,
Кивĕ юрă, иртнĕ юрă
Кĕввĕме кĕрет юхса.

Кĕреке умне лар эсĕ,
Чип-чипер Настаç инкем!

Туртăпăр автан йĕтесĕ,
Тукмакки мăнтăр иккен.

Ман валли кĕпе çĕлетĕн
Шурă йĕтĕн пирĕнчен,
Çухине тĕрĕ тĕрлетĕп,—
Ан манах йĕтес çинчен.

Йĕтеспе илетĕп парăм,
Икĕ парăм хам енчен:
Чи малтан эп сăвă парăп
Силпири ĕçсем çинчен;

Тепĕр парăм, тырă сутăп
Хамăр ялăн лавкинче.
Саншăн илĕп симĕс тутăр, —
Кайăк ларĕ варринче.

1934.

# ГРАНИТ

Хăй туйипе ача чухне
Çемçе шап-шурă юр çине
Ятне çырсассăн, ăнсăртран
Ăна тăман шăлса кайсан,
Çиленнĕ вăл, вара ятне
Картланă симĕс пăр çине.

Шутланă вăл: çурхи çырма
Пурне те уççăн вулама
Инçе юхтарĕ ун ятне,
Кăтартĕ сĕм вăрмансене,
Шывран ятне сыпса илсен,
Çÿлте какалĕç акăшсем.

Анчах та Иванов пĕлмен,
Сăн-пичĕ юласса сисмен:
Таса карел гранитĕнчен
Ларать хăй çурчĕ умĕнче,
Ăна катаймĕç ăнсăртран
Нихçан та çăмăр е тăман.

1940.

## ПĔЧĔК КĔРКУРИ МĂРСИ ХĂЙ МУСКАВРА ПУЛНИ ÇИНЧЕН КАЛАСА ПАНИ

Çӳрemестчĕ инçете
Йывăç сухапуçĕ.
Эп пĕлетĕп: ман хирте
Вунтăват çăлкуçĕ.

Ик çырма, сайра вăрман,
Пур тата пĕр шурлăх.
Çулăмсем ман вăрăм мар, —
Пӳрнесем пек шутлă.

Çирĕм çухрăмран ытла
Аякка кайманччĕ,
Белебей текен хула
Маншăн чи аванччĕ.

Ун пек шавлă та хитре
Хулана пĕлеп-и,
Урăх çук-тăр тĕнчере—
Шухăшлаттăм эпĕ.

Урамĕнче шурă чул
Курăнать чиперĕн,
Тырăлла лав иртнĕ чух
Силленет кĕперĕ:

Аслати пек кĕр те кĕр!..
Чаплă, кĕрĕс-мерĕс...
Ак сире хăма кĕпер,
Белебей кĕперĕ!

Эх, чӳречесем йăлт-ялт
Хĕвелпе çунаççĕ;
Тавраран хăпса пур ял
Пасара пыраççĕ.

Манăн, ватăла киле,
Тарăн шухăш килчĕ:
Тĕнчене курас килет,
Кăмăл питĕ çунчĕ.

Ыратать пек чĕрере,
Юн çӳрет васкавăн.
Хăй патне тек сĕтĕрет
Хам курман Мускавăм.

Такана пусса ĕнтĕ
Васкама пуçларăм:
— Пуçĕ-урине ĕнтех,
Шăртанне ту, арăм!

Ну, чупатăп, вăркăнап,
Чăн-и, е халлап-и.
Пĕр сип-симĕс вакуна
Вырăнаçрăм эпĕ.

Икĕ тавлăк хăш та хаш
Карĕ пирĕн пуйăс:
Айккипе вăрман, ыраш,
Аслă тулă уйĕ.

Чаплă хулана ирех
Кĕмелле ман лайăх,
Чи илемлĕ тумтире
Тăхăнăп та кайăп.

Кантăкран çăпатана
Хăвăрт ывăтатăп,
Хитрелетрĕ урана
Сарă сăран атă.

Вокзала пырса çитсен,
Алчăрарĕ куçăм:
Хĕрех тĕрлĕ алăксем
Пур енче те уçă.

Çĕр айне кĕрсе кайсан,
Çĕр çинчи пек çутă,
Метрори шеп пуйăсран
Иртекен çил çук-тăр.

Антăм. Çĕр çине тухма
Шухăшăм килмерĕ:
Хăй тĕллĕн шăван пусма
Çӳлелле çĕклерĕ.

Эх, Мускав хулин тĕрлĕ
Урамсем нумай-мĕн,
Панулми пекех хĕрлĕ
Курăнать трамвайĕ.

Çурчĕсем тĕлĕнмелле,
Тирек йывăç майлă
Кăн-кăвак пĕлĕтелле
Тӳрĕ ӳссе кайнă.

Çаврăнтăм пăхса ун-кун,
Утрăм хутран хут эп,
Пурăнтăм та виçĕ кун,
Туйăнчĕ минут пек.

Мавзолей тесен, чĕре
Камăнах эрленмĕ,
Тем калас пекех чĕрĕ
Курăнайрĕ Ленин.

Вăл каларĕшле, тĕнче
Пирĕн майлă пулчĕ;
Ĕлĕк пирĕн ялсенче
Тӳсейми хĕнхурччĕ.

Пирĕн пек ялти этем
Инçене каймастчĕ,
Вилĕме кĕтсе ватсем
Тупăксем усратчĕç.

Эпĕ ватă ĕмĕрте
Мускава куратăп,
Ленин умĕнчен иртеп,
Пуçăма таятăп.

Таврăнтăм тăван яла,
Пултăм çамрăк çын пек,
Тĕлĕкре çÿреп ялан
Аслă Мускавра эп.

1935.

# ТĂПРА ИЛЕМĔ

* * *

Çынсем юрлаччĕр, çырччĕр ода
Çеçке çинчен те каç çинчен!
Хаваслă эпĕ—тутлă утă
Çăра ÿссен çарансенче;
Улма чăпар çамкаллă утăм
Чĕвен ташлатăр картинче,
Сĕлĕ çисе мăнтăр çÿретĕр,
Çăл шывĕ умĕнче кĕçентĕр!

Хитре хура тăпра хăвачĕ!
Уйхир çеçкесĕр тап-таса
Пулсан, çиме аван кулачă,
Вара тĕреклĕ хам сасса
Çĕклетĕп эп, тăпра поэчĕ,
Шап-шура чĕлĕсем касса
Сĕтел тулли умма хуратăп,
Ура явса ларса юрлатăп.

Хире тухсан, хуллен утатăп,
Шăрчăксемпе çеçкесене
Такан кĕлеллĕ йывăр ată
Ирсе иртет. Парлак çине
Упне выртатăп та, хуратăп
Чĕлхем çине ун тăприне,
Пĕлесшĕн эпĕ—акнă тырă
Çитес çулта ÿсет-и ырă?

1940.

1

Çурхи кунра сăртсен лапамĕ
Лăс пек ешернĕ вăхăтра
Йăптăх тĕкне тăкса хурамĕш
Пусса ларсассăн йăвара;

2

Шап-шурă хурăн тутлă шывĕ
Юхсассăн йывăç чĕресе,
Карта туллийĕ выльăх сывă
Тухсассăн кĕр-кĕр кĕрлесе;

3

Чаршавлă асамат кĕперĕ
Тарай тутри пек карăнсан,
Чăпар куккук сасси кĕрлерĕ,
Каш-каш кашларĕ сĕм вăрман.

1935.

## ТЕКЕРЛĔК

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Ăçта каян, текерлĕк?

— Тăван киле каятăп,
Чĕпсем патне васкатăп.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Çурту ăçта, текерлĕк?

— Çӳлĕ тăвăн аркинче,
Тыла пуççи айĕнче.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Çурту епле, текерлĕк?

— Маччи çинче пĕр тăтăш
Ӳссе кашлать ват хăмăш.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Урай мĕнтен, тăкерлĕк?

— Шурă чултан урайĕ,
Мамăк сарнă—пит лайăх.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Мĕншĕн çӳлте, текерлĕк?

— Çӳл ту çинчен пăхсассăн—
Йĕри-тавра хаваслă.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Мĕншĕн апла, текерлĕк?

— Тырă-пулă хумханать,
Аслă халăх савăнать.

1940.

* * *

Çӳл ту çинче, шур чул çинче
Чие пек хӗрлӗ кӗпепе
Ларатӑп эп пӗччепçӗ.
Выля-выля пуç тӑрринче
Кӗрхи тӑрна картийӗ пек
Шур пӗлӗтсем иртеççӗ.

Куккук сассиллӗ улӑхра
Çаран хумханнине савса
Йӗри-тавра пӑхатӑп,
Кӑмӑл хумханнӑ вӑхӑтра
Çуралнӑ тунсӑхлӑ сӑвва
Шур чул çине çыратӑп.

1938,

* * *

Çĕмĕртсем çеçке çурсан,
Вăранать вăрман илемĕ,
Хирсенче вĕçмест тусан,
Ешерет уйхир лапамĕ.

Вăштăр-вăштăр çил вĕрсен,
Хускалать те аслă улăх,—
Аванаççĕ йывăççем,
Хумханать тулли тырпулă.

Ун чухне хитре хирне
Саванса пăхать те халăх,—
Хут çине, перо патне
Туртăнать вара ман алă.

1935.

* * *

Чӳречене ярах уҫсан,
Туятӑп ҫӗмӗрт шӑршине.
Тӗтре шӑвать. Вӗҫет тусан.
Кӗтӳ тухать ҫерем ҫине.

Вылярӗ ҫиҫӗм инҫетре
Нумай хӗҫсем пек хуҫӑлса.
Хуралнӑ тӗксӗм пӗлӗтрен
Лӳшкетрӗ ҫумӑр чашкӑртса.

Хӑватлӑ аслати кӗр-кӗр
Аҫа ҫапса кӗрӗлтетсен,
Ҫуса тасалчӗҫ вӗҫӗмсӗр
Кӗрен те ешӗл уйхирсем.

Пӗчӗк ача пек ҫӑвӑнса
Сывларӗ сарлака ҫӗршыв.
Уҫ сывлӑш курӑнать таса.
Пӳрте кӗрет озон шӑрши.

1934.

* * *

Иртсе çухалчĕ çумăр çулĕ.
Телейĕм çӳрĕ хирсене.
Тырпулă çурĕ, çурĕç çулă
Хăпартусем сĕтел çине.

Кĕрхи тиха пекех хаваслăх
Сăвва кĕресшĕн кĕçенет.
Вăраннă карăшсем пĕр саслăн
Пуçланă юрă илтĕнет.

Пĕкĕ пек асамат кĕперĕ
Тăва кӳлет те утланать.
Çĕр пăсланать. Хĕвел епрерĕ.
Хĕрсем каяççĕ пултрана.

1934.

* * *

Урамăр аслă, çуртăр хулăм,
Чиеллĕ сатăр çеçкере.
Юратнă тусăм, çыpă куçăм,
Пĕртте каймастăн чĕререн.

Эпир инçе, анчах та чунăм
Ялан кĕрекĕр умĕнче.
Пире çăкăр-тăварлă тунă,
Хаваслăх панă çут тĕнче.

Йĕс аврлă сап-сарă алтăр
Тулли хăмлаллă сăрăра
Пире кĕтсе тултарнă, парăр
Хушса илемлĕ юррăра!

Урамăр аслă, çуртăр хулăм,
Чиеллĕ сатăр çеçкере.
Телейлĕ пулăр, вăйă-кулă
Шутартăр сирĕн ĕмĕре.

1940.

* * *

Савнă тусăм, эсĕ манăн асăмра,
Куçусем сан хурлăхан пек хуп-хура.

Çавăнпа та хурлăха мар, ырлăха
Сатăмра ӳстертĕм икĕ хурлăхан.

Чиесем пек хĕрлĕ чăмăр питӳсем.
Ик чие ӳстертĕм—пиçрĕç çырлисем,

Тутансам тăвата йывăç çырлине,
Ытала вĕсен юратнă хуçине.

Сан пĕвӳ, савниçĕм, тополь пек тӳп-тӳр,
Çавăнпа хам лартнă çамрăк тополь пур.

Вăл кашлать, тăванăм, халĕ çил çинче,
Хам сăрланă сарă кантăк умĕнче.

1940.

ЮРАТУ

## ХУРА КУÇСЕМ

Вут çунать-и манăн чĕрере?
Мĕншĕн ытаклатăп минтере?

Умăмра пĕчĕк кăна портрет
Кăмăла хуçать те илĕртет.

Эп пăхатăп: унăн куçĕсем—
Чĕвĕлти чĕкеçĕн чĕпписем.

Шурă тутăр та шапшур кĕпе—
Хĕр вĕçмешкĕн хатĕр акăш пек.

Вĕçрĕ акăш. Вĕçрĕç чĕкеççем.
Халь ăçта эсир, хура куççем?

Кам çине пăхатăр яланах,
Асăрта тытатăр-ши мана?

1935.

* * *

Кӑвакарчӑн пӗсехи пек кӑн-кӑвак
Пурçăн тутӑр çыхнӑ пӗр хӗре
Куртӑм эпӗ, çавӑнтах кӑвар
Ялкӑшма пуçларӗ чӗрере.

Эп шанманччĕ çакӑ савнӑ чун
Тытасса ман сарлака хула.
Кӗркуннеччĕ. Сулхӑнччĕ ун чух
Атӑл хӗрринчи хитре хула.

Туйӑнчӗ вӑл маншӑн çывӑх, пӗр тӑван.
Яланах курӑттӑм тӗлӗкре
Кӑвакарчӑн пӗсехи пек кӑн-кӑвак
Пурçăн тутӑр çыхнӑ çав хӗре.

Мӑшӑр пулчӗ вӑл. Телейӗм, тав-тавах!
Иксӗмӗр кӗтетпӗр савӑнса
Кӑвакарчӑн пӗсехи пек кӑн-кӑвак
Куçлӑ пирӗн ывӑл пуласса.

1940.

* * *

Астăватăп, тусăмçăм, пĕрре
Çакă çĕмĕрт курнăччĕ пире.

Шурăмпуç килетчĕ, иксĕмĕр
Унăн айĕнче çӳрерĕмĕр.

Çăлкуçне шур акăш савнă пек
Эп сана саваттăм чĕремпех.

Юрататтăн эсĕ теприне,
Хĕр тути пек бантик çыхнине.

Вăхăт иртрĕ, иртрĕ виçĕ çул.
Тин мана ан сав, ан тăк куççуль.

Ан чупту, тăванăм, ан калаç,—
Виçĕм çул çухалнă пирĕн каç.

Виç çул ĕлĕк вĕрнĕ ăш çиле
Каялла кӳреймĕн. Ан çилен!

Акăш, çамрăк акăш ĕмĕрне
Анмĕ пĕр пистернĕ çăлкуçне.

1940.

## ХӖРПЕ ШӐПЧӐК

*Абдулла Тукайран*

Х ӗ р

Каҫ та пулчӗ. Пӗлӗт хӗрринче
Сар хӗвел хӗлхемӗ сирӗлчӗ.
Мӗншӗн эсӗ, шӑпчӑкӑм, кичем,
Мӗншӗн юрламастӑн халиччен?
Эсӗ, тусӑм, эсӗ янтратсан,
Кӑмӑлӑм ҫӗкленӗ, вылӗ ман.
Читлӗхӳ хитре сан, пур апат,
Мӗншӗн эсӗ кӑмӑлсӑр ҫапах?

Ш ӑ п ч ӑ к

Юррӑма юрлаймӑп эп кунта,
Ман юрланӑ вырӑн вӑрманта.
Манӑн савнӑ ирӗкри тӗнче
Шур кӗпеллӗ ҫӗмӗрт айӗнче.
Тӑлӑх юлнӑ тусӑмҫӑм пӗччен
Кулянать те, ҫурҫӗр иртиччен
Кӗвӗлет йӑпанчӑк юррине,
Тӗкӗпе шӑлать хӑй куҫҫульне,
Сӗм вӑрман ӑшне, турат ҫине

Йыхăрать те, илĕртсе чĕнет.
Манăн читлĕх çамрăк хăваран,
Кам хăтарĕ çакă тыткăнран?
Ирĕкри çеç юрă-кĕвĕре
Савăнма вĕреннĕ ман чĕре.

## Хĕр

Чунăм, эсĕ курмăн хĕнлĕхе,
Уçрăм эпĕ акă читлĕхе.
Вĕç илемлĕ ешĕл вăрмана,
Ах, анчах та ан мансам мана:
Кăмалăм çунан самантсенче
Шур кĕпеллĕ çĕмĕрт айĕнчен
Кил хавассăн манăн садăма,
Çунатна çапса, ай, юрлама.

1910.

* * *

Тукасри Иванăн лайăх купăс пур.
Ман пекех ача хăй, кĕввисем маттур.

Кĕвĕ майăн майлăн-майлăн пит хĕрсе
Таш-ташлаççĕ пирĕн чип-чипер хĕрсем.

Хурама пек авăнаççĕ тӳрĕ пĕвĕсем,
Кăвакал чĕппи пек ярăнаççĕ урисем.

Ман варлин пилеш пек хĕрлĕ тутăрĕ
Çил çинчи кăвар пек хĕмлĕн вĕлкĕшрĕ.

Вăл мана юратнă, савнă яланах,
Ак паян пăрахрĕ, сивĕтрĕ мана.

Мĕншĕн Ивана вăл ăшшăн куç хĕсет?
Мĕншĕн-ха ăна вăл тутăр парнелет?

Туйрăм ĕнтĕ, пĕлтĕм халĕ мĕншĕнне,
Сирпĕтсе ярасчĕ купăсне-мĕнне!

Хурланатăп эпĕ. Мĕн кăна тăвам?
Кăмăла хуçатăн, тусăмçăм Иван!

Манăн шухăш йывăр, çавăнпа чĕре
Кăлт тапса илет те, алă чĕтĕрет.

Куçăмсем хура та, хулăмсем патвар.
Ивантан мĕнпе ха эпĕ пит начар?

Сакăршар уралла капансем çине
Вăркăтап пичке пек пысăк кĕлтене.

Çуркунне хисеплĕ ака-туйĕнче
Чи илемлĕ тутăр камăн аллинче?

Эпĕ купăс илĕп. Çӳрĕп купăспа
Тукасри Иван пек каласа ăста.

Сывлăм пек çухалĕ манăн хĕнлĕхĕм,
Пӳрнене ачашлĕ купăс хĕлĕхĕ.

Урăм-сурăм чăрсăр юрă-кĕвĕре
Илĕртсе ташлатăп савнă хам хĕре.

Тин вара, Иван тус, витĕр пĕлĕпĕр:
Камшăн ӳснĕ пукане пек хĕрĕмĕр?

Сан енче-и, ман енче-и ун чухне
Вĕлкĕштерĕ Ĕрĕнпурăн тутăрне?

1938.

## УРАМ УРЛĂ ХĔР

Яланах пăхатăп ирхине
Чĕнтĕрлĕ хапхаллă çурт çине.

Вăтакас урамĕ урлă çурт,
Çуртĕнче илемлĕ пĕр хĕр пур.

Кашни кун та, кашни каç та çĕр
Шухăшсем иртеççĕ канăçсăр.

Яланах пит тутлă тĕлĕкре
Куркалатăп эпĕ çав хĕре.

Мĕншĕн эсĕ питĕ çывăхра?
Мĕншĕн мар-ха çитмĕл çухрăмра?

Çырăттăм, ун чух аса килсен,
Шур хута хуратнă юрăсем.

Эп кунта та, эсĕ леш енче:
Хире-хирĕç икĕ чÿрече.

Хушшăмăр, чечекĕм, виç хăлаç,
Пĕр-пĕрне куратпăр ир те каç.

Çав-çавах хальччен иксĕмĕрĕн
Калаçса пулмарĕ чĕререн.

Ман аттеçĕм лекнĕ элеке,—
Вăрă пулнă, теççĕ, ĕлĕкех.

Мĕншĕн ман аттемшĕн айăпра
Пуçăма усса çӳрес вара?

Эс иментĕн те килтисенчен,—
Кантăкна уçмастăн ман енче.

Пурпĕрех, хĕвелĕм, пурпĕрех,
Эс мана усратăн чĕрере.

Пирĕн почта пулчĕ çамрăк чух
Тăкăрлăк панчи пĕр шурă чул.

Кăмăлтан сана сава-сава
Шур хута хуратнă çырăва

Эс вăрттăн илеттĕн каçсенче
Тăкăрлăк шур чулĕ айĕнчен.

Ан кулян, савниçĕм, ан ятла,—
Урăх почтă пулĕ малалла.

Кулленех иртет-çке икĕ хут
Йăлтăркка çунатлă самолет.

Кăн-кăвак хитре конвертсене
Çӳретет вăл савнисем патне.

Лăплантар, савниçĕм, чĕреме!
Эп вĕренĕп çиçĕм пек вĕçме.

Ял çинчен те иртĕп. Ялăмăр
Пăхса юлĕ манăн вăйăма.

Ун чухне пăрахăп чи çӳлтен
Тутăрпа чĕркенĕ пĕр конверт.

1938.

* * *

Сана курсан, кӗскелчӗ манӑн утӑм,
Сасартӑк чарӑнтӑм, куҫусенче
Вӑрман хумханнине, тӳпе ҫинче
Карта хуркайӑк вӗҫнине эп куртӑм.

Шаль тутӑру ҫунат пекех, манран
Тарас пекех, ҫилсем ҫинче вӗҫетчӗ.
Тапатчӗ юнӑм, ман чӗре чӗтретчӗ.
Эс карӑн та, каймарӑн асӑмран.

Хӑвӑн ҫумна пӗр майӑн илӗртсе,
Кӑвак кӑварлӑ санӑн куҫусем
Куҫхаршисен айӗпелен ҫунатчӗҫ.

Тӑван хура вӑрманӑн сӑнӗсем
Тӗсне ӳкернӗ сан куҫхаршисем
Чӗкеҫ ҫуначӗ пек йӗпхӗн хураччӗ.

1940.

* * *

Тусӑм, тусӑм, савнӑ чун,
Пӗр йӑмра турачӗ,
Эс манпа калаҫнӑ чух,
Алари туяччӗ.

Юрату ҫунса хӗрсен,
Астуман, куратӑн,
Нӳр тӑпра ӑшне кӗрсе
Юлнӑ ман туратӑм.

Халӗ ӳснӗ ҫав йӑмра
Пӳртсенчен те ҫӳлӗ,
Сан ҫӳҫӳ пекех кӑтра,
Сан пек тӳрӗ пӳлӗ.

Каҫхине ун айӗнче
Ҫамрӑксем лараҫҫӗ,
Ӗлӗк уйӑх ҫуттинче
Эп сана савни ҫинчен,
Ман туя юлни ҫинчен
Юрӑ юрламаҫҫӗ.

1940.

КАЛАВСЕМПЕ

ЮМАХСЕМ

# ТАРАС ШЕВЧЕНКО
# АТӐЛ ҪИНЧЕ

*(1857 ҫул, сентябрь)*

Кӗрхи илемлӗ Атӑл шывӗ
Пӗрре йӑвашшӑн кӳрӑнать,
Тепре ҫиллеслӗ, сулхӑн, сивӗ, —
Хумне йӑтать те ывӑтать.

Вара каллех хӑмӑр ҫанталӑк
Каять пек тутлӑ ыйӑха.
Ҫак сӑнсене нихҫан манмаслӑх
Йӗри-тавра пӑха-пӑха

Прахут ҫинче Тарас пӗччен ҫӗ
Пӗр уткалать, пӗрре тӑрать.
Хур-кайӑксем вӗҫсе иртеҫҫӗ
Карти-картипе кӑнтӑра.

Украйнӑ урлӑ иртнӗ майӑн
Вӗсен тӗкӗ ӳксе, унта
Ырхан хир тӑрӑх вӗҫсе кайӗ,
Пырса ҫакланӗ хуралта.

Вĕсен сасси хĕн-хур пĕлмесĕр
Вĕçĕ чиелĕхсем çинче,
Анчах инçе Украйна, эсĕ,
Тарас сасне илтсессĕнччĕ!

Пĕр вырăнта тăма—çук канăç,
Часрах, часрах çитес килет,
Пырса кĕрес асап хуплана
Тăван çĕре, тăван киле.

Умра ват çын, тытса бандура,
Чĕтреттĕрччĕ хĕлĕхсене,
Чуна хĕссе çуралнă юрă,
Пĕлтертĕр халăх чăнлăхне!

Канма пĕлмесĕр, урлă-пирлĕ
Тарас утать, утать, утать.
Те вăл вăй-халсăр, те вăл чирлĕ,
Аш-чикĕ çуннăçем çунать.

Ун асĕнче мунча шуйттанĕ,
Ийе çури пек харкашса
Тухать тискер ĕçсен тăванĕ—
Пĕрремĕш Микулай патша.

Çап-çутă ылттăн ун пагонĕ
Палач пуртти пек курăнать,
Ун çиййĕнче Рылейĕв юнĕ
Тумлам-тумламăн сăрхăнать.

Персе ӳкет аманнӑ Пушкин.
Ун айӗнче шап-шурӑ юр.
Элек сарса ак ушкӑн-ушкӑн
Кӗрлет салонлӑ Питӗрпур.

Малтан мала. Жигуль вӑрманӗ
Сап-сарӑ сарӑлать анчах.
Кунтан авал иртсе кайман-и
Хӑмаҫ кӗпеллӗ Пугачев?..

Усаллӑн мӗкӗрет шыв шавӗ.
Сикет хум хумсене хуса.
Ывӑҫсенче укҫа янравӗ—
Ларать купса хули—Хусан.

Хирсем. Калча ҫинче кӗҫенчӗҫ
Ҫинҫе уралла тихасем.
Ак ял. Ҫара йӑмра турачӗ.
Умра ҫаплах, ҫаплах хумсем.

Сӗве синче тӗкленнӗ акӑш,
Шур акӑш евӗр Шупашкар
Алтупаньри пекех яр уҫӑ
Сиксе тухать. Илемсӗр мар.

Кун-ҫулӗ тӑрӑх ватӑ карчӑк,
Пӑхсан—ача пек пӗчӗкҫӗ.
Кивелнӗ ҫурчӗсем хӑпарчӗҫ,
Хӗвел ҫутти те сирпӗнчӗ.

Куҫа ҫӳпсем кӳртес пек ирсӗр
Ҫап-ҫутӑ шӗвӗр чиркӳсем
Сӑртсем ҫинче вӗҫӗ-хӗррисӗр
Ларнисене пӑхса илсен,

Чансем ирпе пӑсаҫҫӗ, тетӗн,
Хумсем кумса хумханнине,
Асна та шухӑшна кӳртетӗн
Ҫӑхан сӑмсаллӑ пупсене.

Ула-чӑлаллӑ пристань шавлӑ.
Тусанлӑ ҫил тек вӗркӗшет.
Тӗрлӗ тумтирлӗ ушкӑн халӑх
Кӑткӑ тӗми пек тӗркӗшет.

Сӗм суккӑрскер, пӗр ват кӗслеҫӗ
Сӗнксе ларать пӗр чул ҫинче,
Тымарлӑ аллисем иртеҫҫӗ
Янравлӑ хӗлӗхсем ҫинчен.

Сӑн-пичӗ унӑн питӗ сулхӑн,
Юрланӑ чух алли чӗтрет,
Асат хуҫни пек хуйхӑ-суйхӑ
Пусни ҫинчен вӑл кӗвӗлет.

Инҫе, инҫе тӑван Украинӑ!
Бандурӑ хӗлӗхне тивсе
Кӗрлеҫҫӗ тӑваллӑ ҫил майла
Унта ҫиллеслӗ юрӑсем.

Кунта ак пристань. Акă халăх.
Тăрать кунта имшер мĕскĕн,
Тăрать этем ула-чăлаллă
Саплана кив сăхманласкер.

Вăл хул айне чиксе хĕсгерне
Сутма пĕçерне чăххине.
Сутасчĕ. Çавăнпа типтерлĕн
Илме сĕнет вăл çынсене.

Килте кĕтет—тет—куланайĕ.
Тарас çине пăхса илет.
Вăл хурланса калаçнă майăн
Вĕри куççулĕ сирпĕнет.

Чăхха илсе Тарас Шевченко
Чупать хăйĕн каютине.
Илемлĕ пăрахут та акă
Хускатрĕ хулăн хумсене.

Силленчĕксĕр тип-тикĕс шурĕ.
Хĕвел çутти выляре йăр та яр.
Ту хыçĕнче юлать шап-шурă,
Нумай чиркÿллĕ Шупашкар.

Тарас шутлать: чура хресченĕ
Сутса вăйне, сутса хăйне
Ялан, ялан вăл тÿлемен-и,
Патак çисе, куланайне?

Эрешлĕ двореца кĕресчĕ
Çĕтĕк сăхманлă çав хресчен,
Çак чăххипе тӳрех пересчĕ
Тискер патшан çамкийĕнчен.

Тарас кичем те пĕр пĕччен çĕ
Тăрать йĕри-тавра пăхса.
Сасартăк тытрĕ, вăркăнтарчĕ
Хумханнă Атăла чăхха.

1939.

## УТАРТА

Кăнтăрла хĕвел çуттисĕр,
Маччаланнă çулçăллă
Сулхăнрах юманлăх витĕр
Малалла та малалла
Виç хăлаç çӳлтен хăрушă
Ӳкекен çăл айĕнчен,
Хĕл каçмашкăн тунă пушă
Пурăш шăтăкĕ панчен
Эп ута-ута тухатăп
Аслă уçă уçланка.
Утарта куратăп ватă
Шур сухаллă Кĕлпука,
Пăявне явма чаратăп,
Вăрăм ĕмĕрпе вăйхал
Ыр сунатăп, паллашатăп,
Тыттаратăп эпĕ ал.
Чĕлĕмне Мускав тапакĕ
Пусса хутăм та вара,
Эп татса парне чечекĕ
Çакрăм хамăн кăкăра.

Ушкăнпа тата пĕчченçĕ
Ҫаллĕ-маллĕ вĕркĕшсе,

Куракċем çинче вĕçеççĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем.
Таврара вĕçĕ хĕррисĕр,
Таçтанах илтĕнмелле
Сăрлататать пасар пек икçĕр
Аллăран ытла вĕлле.
Манпала калаçнă майăн
Тĕк тăмасть Кĕлпукăм ман,
Çăп-çăра туратлă лайăх
Ватă кутамас юман
Çунтарас пекех хĕвеллĕ
Шăрăха хăй çулçипе
Витнĕ сулхăнра йĕркеллĕ,
Васкамасăр шĕшлипе
Шайăрса хурать те пушăт,
Уйăрать икшер пая, –
Çĕрмелле ан пултăр пушă,—
Шăл çыртса явать пăяв.

— Ывăлсем тата—тет—хамăн
Явнă пур пек пăява
Хам килген тăсас пулсассăн,
Çитĕ чаплă Мускава.
Асатте, атте, мĕнпурĕ
Пирĕн йăх кантра-вĕрен
Явнине кунтан тӳп-тӳрĕ
Тăсайсассăн пĕр ĕрет,
Манăн шухăшпа, вăл каçĕ
Китайран та лерелле,

Йăпуна çитме пăртакçă
Ман тата пĕтĕрмелле.
Çăпата мĕн чухлĕ тунă?
Мăшăрне пĕр çын илсен,
Темиçе пиншер мĕльюнăн
Тухĕç харсăр салтаксем.
Çар пулсан, вĕсем хавассăн
Тинĕс пек кĕрлемелле,
Тăшмана пĕрре çапсассăн,
Лапчăтса ӳкермелле.

Сарă сăрпала сăрланă
Вĕллесем таврашĕнче
Найлатса хуллен сăрлатнă
Вĕçсĕр саса илтĕнчĕ.
Шупăрне Кĕлпук пĕркенчĕ:
— Уйăрать,—тет, кур-ха, кур!
Чăнахах, çӳле çĕкленчĕ
Явăнма пуçланă хурт.
Васкаса Кĕлпук шаккарĕ
Питлĕхне патаккипе,
Сапнă шывĕ ялтăрарĕ
Асамат кĕперĕ пек.
Çăмха пек пулса пĕр йышлă
Явăнса пуçтарăнсан,
Пуç çинчен хурт йывăç урлă
Вĕçрĕ-карĕ утартан.
— Карĕ,—тет Кĕлпук,—çухалĕ—
Урнă пулĕ—тет—ами,—

Йыхӑрса илет—ҫук халӗ,
Пуп каларӗшле, аминь.

Акӑ иккӗн вӑтӑр-ватӑр
Питсене чӗре-чӗре
Вӑркӑнса кӑна чупатпӑр
Тӗксӗм чӑтлӑх витӗрех,
Янтрататпӑр хамӑр хурҫӑ
Питлӗхе ҫапа-ҫапа,
Ҫулҫӑ хыҫҫӑн акӑ ҫулҫӑ
Ҫӑт та ҫат пире ҫупать.
Тӑвӑр ҫул пире кӑларчӗ
Янкӑр уҫӑ улӑха.
Аяла анса ҫухалчӗ
Хуртлӑ хуп-хура ҫӑмха.
Пӗр хуран та пӗр хӗвеллӗн
Хумханса тӑрать ҫаран.
Ҫухӑрса ярать те меллӗн
Шыв ҫине ӳкет чарлан.
Улӑх урлӑшӗ илемлӗ.
Пӗрлӗхен ҫырлисенчен
Хӗрлӗрех шалпар кӗпеллӗ
Кам унта, шыв хӗрринче?
Уртемей мучи, мӑнтарӑн,
Лекнӗ мӗн тамашана,
Тарнӑ хурт килсе хаяррӑн
Сырӑннӑ иккен ӑна.
Кӑшкарла кастарнӑ ҫӳҫӗ
Ҫиййӗнче, куҫхаршинче,

Курăнми хупланнă куçĕ
Айĕнче, сухалĕнче
Тăлланса хуртсем çӳреççĕ
Шыраса пуль амине,
Ушкăнпа пурте килеççĕ
Сулахай хăлхи патне,—
Амăшĕ пытаннă ахăр
Çавăнта—хăлхи ăшне.
Хускалмасăр, шарламасăр,
Хăпартса хăй сехрине,
Çăварне те уçаймасăр,
Аллинче тытса вăлта,
Уртемей вĕлле пек харсăр
Сĕрлесе ларать унта.

Ăнсăртран килсе хуплана
Хуртсенчен хăра-хăра
Уртемей аран-аранăн
Сывласа кăна ларать.
Чĕтремест сухалĕ унăн,
Юнĕ çук пек ӳтĕнче,
Чĕлĕмне мĕнле çеç хунă,—
Çавăн пек çăварĕнче,
Тĕтĕмне çаплах кăвакăн
Ункă-ункă кăларать.
Ун патне тӳп-тӳрĕ акă
Шупăрлă Кĕлпук пырать,
Тытнă пысăк сарă кашăк,
Ала пек пурак ăшне

Хӳтерсе пухса хупласшăн
Тĕтĕрет вăл хуртсене.
Май килмест. Кĕлпук сасартăк:
—Шыçăнмасăр сыв-сывах
Çĕр çинче чĕрĕ пулас тăк,
Уртемей,—тет—сик шыва!

Харсăр сикрĕ, шампăлт турĕ,
Вăркăнса кăна ансат
Аллине сулса çеç шурĕ,
Кăн-кăвак шыва анса
Курăнмарĕ. Аслă, анлă
Авăр çăтрĕ этеме.
Хайĕнчен малтан хăпарнă
Пахăр пуçлă чĕлĕмĕ
Чăпăкне йăтса тӳп-тӳрĕ
Ярăнать хумсем çинче.
Шурă кăпăк шурĕ, шурĕ...
Уртемей те курăнчĕ,
Кунталла ишет хаваслă
Чалăш тăршшĕ пĕвĕпе.
Хăмпă пек çĕкленчĕ хаклă
Пĕрлĕхен тĕслĕ кĕпе.
Чарăнса тăрса хăй урла
Вăлтине сирпĕнтерет,—
Чавса тăршшĕ кĕркке пулă
Çăтăл-çатăл сиккелет.

1939.

## ЫЛТТĂН ТУРА

*Абдулла Тукайран*

Хуп-хура чаканлă çӳлĕ хăмăшсем
Хумханаççĕ, вăштăр-вăштăр çил вĕрсен.

Анайман хĕвел сăрланă пĕлĕтсен
Çунакан кăвар пек хĕрлĕ сăнĕсем

Яранса ӳкеççĕ тарăн шыв çине,—
Пулăсем сиксе ватаççĕ вĕсене.

Кирĕкпе тусан хуплана ӳт-тире
Тасатасшăн эп ишетĕп кӳлĕре.

Талпăнса сикетĕп эпĕ çыранран,
Кăвакал пекех чăматăп хушăран.

Кăкăртан сывлана сывлăш пĕтиччен
Куç уçса выртатăп шывăн тĕпĕнче.

Ĕнтĕркке ерсе тухатăп хĕррине,
Хăпаратăп пысăк тунката çине.

Тăхăнатăп тĕрĕленĕ кĕпене,
Тюбетей пусса лартатăп пуç çине.

Йывăç умĕнче пĕр хĕр çӳçне турать,
Аллинче ун çугă ылгтăн пĕр тура.

Пĕвĕ-сийĕ хурама пек авăнать,
Çурăм тăрăх шыв тумламĕ ярăнать.

Ытарма çук лайăх, чип-чипер, хитре,—
Ёмĕрте курманччĕ эп ун пек хĕре.

Шыв çине йăваннă унăн мĕлкине
Хум илет те, хăвалать шăп ман енне.

Хам хăратăп, хам чĕтретĕп, чун сӳлет:
Ыталассăм, чуптăвассăм ман килет.

Алă сулчĕ, чăмрĕ-карĕ пĕр пĕччен,
Турине хăварчĕ шурă чул çинче.

Кăпăк та тухмарĕ. Кĕтрĕм, кĕтрĕм те,
Юн сиксе вылять те, чĕрене хĕртет.

Çĕр çинче хальччен никам та илеймен
Çак ахах-мерчен пек чаплă илеме

Ман тепре хурасчĕ куçăмсен умне,
Итлесе пăхасчĕ унăн юррине.

Кĕтрĕм... кĕтрĕм... Кĕмĕл уйăх хăпарать,
Шурă акăш евĕр лăпкă ярăнать.

Асăнмалăх илтĕм ылттăн турине,
Васкаса уттартăм хамăн кил енне.

* * *

Шăпчăксем юрлаççĕ аслă улăхра.
Пулăсем сикеççĕ çутă çырмара.

Çĕмĕрт айĕнче хаваслă, вĕçĕмсĕр
Савнипе çӳретпĕр лăпкăн иксĕмĕр.

Ыталатăп, чуптăватăп та ăна,—
Парнелетĕп хаклă ылттăн турана.

Мăшăрăн эпир иртетпĕр еррипен
Хăмăшсем хумханнă кӳлĕ хĕррипе.

Шыв хумханчĕ, сарă уйăх çутинче
Ярăнса тухан шывамăш курăнчĕ.

Ним чĕнмесĕр пычĕ, манăн савнине
Çавăтса пытанчĕ çутă хум айне.

Астăватăп халь те ылттăн турине,
Çӳреместĕп эпĕ кӳлĕ хĕррине.

1940.

## ЧУЛÇĂ

*Абдулла Тукайран*

Ваттисем илтсе-пĕлсе
Каласа параççĕ:
Пуранна тет ĕлĕкех
Чул касан ăстаçă.

Пуранна тет чип-чипер,
Шуна тет кунçулĕ,
Çапна та—тӳсмен нихçан—
Ванна пысăк чулĕ.

Тимĕрçĕ хĕрте-хĕрте
Шăрантарнă хурçă.
Çавăн пек ĕçле-ĕçле
Тĕрекленнĕ чулçă.

Ĕçĕнчен пĕрре килсен
Шăммисем сураççĕ,
Çавăнпа кăна анчах
Тарăхнă пăртакçă.

Тĕрĕсси çав тĕрĕсех,
Кирлĕ çын вăйхалĕ:
Кулленех çӳл ту çинче
Чулсене ват халĕ!

Ĕмĕр иртĕ, тет, хуллен,
Эпĕ пулăп ватă,
Унчухне вара епле
Чулсене, тет, ватăп...

Кукăр йывăç пек пĕччен
Пулăп эп мăнтарăн,
Вилĕме кĕте-кĕте
Хуйхăрса, тет, ларăп.

Ĕмĕрте çĕрме пуян
Ман пĕрре пуласчĕ,
Çеп-çемçе тӳшек çинче
Савăнса выртасчĕ.

Калама çеç ĕлкĕрчĕ,
Пулчĕ тем амакĕ:
Аллинче тăра парать
Пĕр автан тукмакĕ.

Кив çатан вырăнĕнче
Хӳмесем çӳп-çӳлĕ.
Килкартийĕн варринче
Çаврашка пĕр кӳлĕ.

Ун çинче хĕвел çутти
Выляни илемлĕ.
Ушкăн-ушкăн кăвакал
Кӳллине иленнĕ.

Тĕлĕнсе кăна ларать
Чул касан ăстаçă:
Чупкалаççĕ умĕнче
Çичĕ вăйлă тарçă.

Мул таврашĕ килĕнче
Сыхланать-мĕн хытă,—
Пӳрчĕ умĕнче выртать
Сăнчăрлана йытă.

Пĕр çĕрле, тет, ăнсăртран
Килĕ вăр-хурахĕ,
Мулăма илес тесе,
Вĕлерсе пăрахĕ.

Ыйхăсăр хура каççем
Çаплипех шăваççĕ,—
Тарăхса çитет хайхи
Чул касан ăстаçă.

Ирхине пĕрре ахаль
Урама пăхуçăн
Иртекен хан умĕнче
Чарăнать ун куçĕ.

Хан лаши хуллен, хуллен
Тикĕс утнă майăн,
Хыçĕнче пыраççĕ-çке
Салтаксем нумайăн.

Çук иккен телейĕм, тет,
Чул касан ăстаçă,—
Мулшăн хыпăнса каççем
Ыйăхсăр шăваççĕ.

Канăçсăр иртет иккен
Пурнăçĕ пуянăн;
Пысăк çар тытасчĕ те—
Хан пуласчĕ манăн.

Пирĕн чулçă çавăнтах
Ĕмĕтленнĕ майăн,
Хăй каларĕшле, самант
Хан пулса та кайнă.

Унăн хыççăн ерипен
Салтаксем утаççĕ.
Унăн кăмăлне кўрсе,
Юрăсем юрлаççĕ.

Пулмасан ун чух вĕри
Шăрăхри çанталăк,
Халиччен вăл çўрĕччĕ
Хан пулса мухтавлă.

Чармасан ăна хĕвелĕн
Сапаланă вучĕ,
Юртĕччĕ те юртĕччĕ
Унăн акăр учĕ.

Çӗр çинче, тет, типиччен
Ман хӗвел пуласчӗ,
Кăн-кăвак тӳпе çинчен
Таврана пăхасчӗ.

Пынă вырăнтан тӳрех
Çӳлелле хăпарчӗ.
Вăл хӗвел пулса тăрать,—
Çуттисем саланчӗç.

Çӗр çине пăхма ăна
Питӗрех аванччӗ.
Уйхирсем те вăрмансем
Ешӗлччӗ, кăвакчӗ.

Ăнсăртран пӗр пӗлӗт ак
Тухрӗ те хупларӗ.
Пăхаймасть ун витӗрех
Сар хӗвел кăварӗ.

Çилленсе çитет каллех
Чул касан ăстаçă:
— Вайлă мар иккен хӗвел,
Пӗлӗтрен хăравçă...

Пысăк пӗлӗт пулниччен
Лайăххи çук ахăр,
Çӳрӗттӗм хуçа пулса,
Никама пăхмасăр.

Чулҫă, хăй калана пек,
Ҫăмăлтан та ҫăмăл
Пĕлĕт пулчĕ, ярăнчĕ—
Лӳшкетет ҫеҫ ҫăмăр.

Уйхирсем тăрах шуса,
Хуралса ҫӳрерĕ;
Хушăран аҫа ҫапса,
Тăвăллă кĕрлерĕ.

Ҫĕр ҫулхи юмансене
Чĕтретсе силлерĕ,
Карчĕ тĕрлĕ тĕссенчен
Асамат кĕперĕ.

Ҫăмăр шӳтерсе иртсен,
Ҫутҫанталăк ырă,
Хумханать те хумханать
Лăс пек ӳснĕ тырă.

Нумайрах ҫумаваскать
Чул касан ăстаҫă—
Ҫырмасем шывпа тулли
Шавласа юхаҫҫĕ.

Ҫакăн пек ҫӳре-ҫӳре
Хавасланнă майăн
Чарăнчĕ чул-ту ӳмне—
Нимĕнле каҫаймăн!

Хăямат иккен чул-ту,
Тет, хайхи ăстаçă:
Пĕлĕтсем, тет, паттăртан
Хăраса тăраççĕ.

— Ту пулса тăрасчĕ ман,—
Тенĕччĕ çеç чулçă,
Симĕс тинĕс умĕнче
Чăннипех ту пулчĕ.

Ахăрса кăтра хумсем
Вăркăнса çапсассăн,
Çаплипех хаяр пăхса
Ту тăрать хавасла.

Çиллĕ тăвăл çухăрни
Уншăн мар хăруша,
Аслати аça çапни
Уншăн вăйсăр, пуша.

Тĕнчере ăна çĕнен
Вăй-хăват та пур-тăр:
Ирхине кĕтмен çĕртен
Янăрарĕ пуртă.

Аптрарĕ пирĕн ту,
Акă пăхкаларĕ:
Унăн кăкăрне ватма
Кам кăна пултарĕ?

Кĕркунне йăмра çинчен
Вĕçкелет-и çулçă?..
Чулсене сирпĕнтерет
Пĕр этем, пĕр Чулçă.

Чул-ту пулнă çыннăмăр
Калаçать хаваслă:
—Çын иккен, тет, тĕнчере
Пуринчен те аслă.

Ĕçлени, тет, хĕвелтен,
Пĕлĕтрен те паттăр.
Икĕ аллăм чулсене
Тепĕр хут, тет, ваттăр.

Телее, тет, виличчен
Манăн пурнăç куртăр.
Эпĕ чулçă пултăм, тет,
Парăр çивĕч пуртă!

1939.

ТУПМАЛЛИ:

## Хисеп те тавтапуç

Хуп-хура тĕксĕм кĕрхи çĕр . . . . . . . . . 5
Ăмăрткайăк . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Хирте . . . . . . . . . . . . . . . . 8
Поэт . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Хумма Çеменĕ сатĕнче эпир . . . . . . . . 11
Юратрăм эп, хирсем, сире . . . . . . . . . . . 12
Иванов вăрманĕ . . . . . . . . . . . . . . 13
Пуппа калаçни . . . . . . . . . . . . . . 14
Йĕгес . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Гранит . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Пĕчĕк Кĕркури Мăрси . . . . . . . . . . 18

## Тăпра илемĕ

Çынсем юрлаччĕр, çырччĕр ода . . . . . . . 25
Çурхи кунра сăртсен лапамĕ . . . . . . . . . . 26
Текерлĕк . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Çӳл ту çинче . . . . . . . . . . . . . . 29
Çĕмĕртсем çеçке çурсан . . . . . . . . . . 30
Чӳречене ярах уçсан . . . . . . . . . . . 31
Иртсе çухалчĕ çумăр çулĕ . . . . . . . . . . 32
Урамăр аслă, çуртăр хулăм . . . . . . . . . 33
Савнă тусăм, эсĕ манăн асăмра . . . . . . . 34

## Юрату


Хура куççем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
Кăвакарчăн пĕсехи пек кăн-кăвак . . . . . . . 38
Астăватăп, тусăмçăм, пĕрре . . . . . . . . . . . . 39
Хĕрпе шăпчăк . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Тукасри Иванăн лайăх купăс пур . . . . . . . 42
Урам урлă хĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Сана курсан, кĕскелчĕ манăн утăм . . . . . . 47
Тусăм, тусăм . . . . . . . . . . . . . . . . . 48


## Калавсемпе юмахсем


Тарас Шевченко Атăл çинче . . . . . . . . . . 51
Утарта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 57
Ылттăн тура . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Чулçă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66

Редактор **Стихван Шавлы.**

НТ 3455. Подписано к печати 13/V—1941 г.
Объем 2,38 п. л. Заказ № 242. Тираж 2700 экз.

Тип. № 1 Управ. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР
г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати.

Цена 2 р. 90 к.

ЯКОВ УХСАЙ

ЛИРИКА

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941